Ас тăвăм

СЕНĔКПЕ ХĂВАЛАСАН ТА ÇЫРМА ПĂРАХМАН

Чăвашсен паллă çыравçи Трубина Мархви /Марфа Дмитриевна Трубина/ çуралнăранпа 120 çул çитнине халалласа Шупашкарта К.В.Иванов ячĕллĕ Литература музейĕнче уяв иртрĕ, “Асăнмалăх, савăнмалăх” ятпа курав уçăлчĕ.

ТРУБИНА Мархви 1888 çулхи авăн уйăхĕн 2-мĕшĕнче хальхи Куславкка районне кĕрекен Аслă Куснар ялĕнче çуралнă. Ăна чăваш ача-пăча литературин классикĕ тесе хаклаççĕ. “Вĕренепе куршанкă”, “Шĕшкĕ”, “Ютран килни”, “Çерçипе шăнкăрч” юмахĕсем ачасене çут çанталăка упрама, сăпайлă та ырă пулма вĕрентеççĕ. “Ача чухнехи” повеç вара – автобиографи хайлавĕ. Çитĕннисене халлланă “Эрех çулĕ”, “Пасар кунĕ”, “Микул Турра хĕнени”, “Улталанмăпăр”, “Ĕç тухмарĕ” калавсене вуласа ĕлĕкхи пурнăç çинчен пĕлетпĕр. “Хăнаран” калавпа “Мучар” повеç –классика произведенийĕсем. Хĕрарăм çыравçă драматургире те калемне тĕрĕсленĕ. “Çĕнтерчĕ” драмине Шупашкарта Чăваш тĕп театрĕн сцени çинче 1929 çулта лартнă, “Килет” пьеси тăрăх лартнă спектакле вара унтах 1930-1931 çулсенче кăтартнă. “Çĕр чĕлхи” пĕр пайлă пьесине малтанхи хут “Çамрăк хресчен” хаçатра 1927 çулхи нарăс-пуш уйăхĕсенче пичетлесе кăларать. Асăннă хайлавпа каярах та тăрмашма пăрахмасть, унти ĕç-пуçа урăхлатса хайлава “Хатĕр пул” журнал редакцине çитерет. Унта пьеса 1930 çулхи 3-мĕш номерте кун çути курнă. Марфа Дмитриевна “Пуян каччă”, “Телейсĕр хĕр” пьесăсем калăплани те паллă.

Мĕнле ĕлкĕрнĕ-ха çыравçă? Литература ĕçне вăл шкулта ачасене вĕрентнĕ хушăрах туса пынă-çке. Кăмăлĕ çирĕпрен çак хытанка та пĕчĕк хĕрарăм /унăн çӳллĕшĕ 1 метр та 53 сантиметр кăна пулнă/ йывăрлăхсенчен хăраман. Произведенийĕсенче ытларах чухне хăй пурăнакан вăхăта сăнарлани те çакăнтанах килнĕ. Иртнĕ тапхăр çинчен мĕн пурĕ те икĕ хайлав çеç – “Ача чухнехи” повеç те “Ĕлĕк вĕренни” калав. Паянхине тĕрĕс хак парса çутатасси çăмăл мар. Çĕршывра пысăк улшăнусем пулса иртнĕ, тĕрлĕ шухăшпа юхăм хуçаланнă чухне – пушшех те. Кирек мĕнле тема хускатсан та унăн хайлавĕ пахалăхпа палăрса тăнă.

Пĕр арçын хайхи унăн тин пичетленсе тухнă хайлавĕнчи усал сăнара хăйĕнчен ӳкерсе илнине тĕшмĕртнĕ те /ят-шывне урăхла кăтартнă пулин те/ урампа лăпкăн кăна иртсе пыракан çыравçа алла сенĕк ярса тытса хыçран хăвалани те пулнă. М.Трубинана киле чупса çитсе питĕрĕнсе ларни кăна хăтарса хăварнă. Хăратни те, ура хуни хăй юратакан ĕçĕнчен те пистереймен ăна.

Пултаруллăскер шкулта та чунне парса ĕçленĕ. Малтан – пуçламăш классене, каярахпа нумай çул вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕскер уроксенче яланах тăван чĕлхепе усă курнă: ачасем еплерех ăнланнине пĕлес тĕллевпе вырăсларан чăвашла куçарттарнă. Хăй ĕçленĕ пур шкулта та тенĕ пекех литература кружокĕ йĕркелесе ертсе пынă. Унта çӳрекен ачасемпе пĕрле алă вĕççĕн çырса литература журналĕсем кăларса тăнă, ял халăхне спектакльсем кăтартнă. Шкул ачисене вăл сăмах илемĕпе вăйне туйма вĕрентнĕ, халăх сăмахлăхне çырса илме ыйтнă. Вăл вĕрентнĕ ачасенчен виççĕшĕ – Иван Вашки, Уйăп Мишши, Макар Хури – çыравçă пулса тăнă.

Тĕпчев ĕçне те хутшăннă хастар хĕрарăм. Уроксене мĕнлерех ирттересси пирки çырнă ăслăлăх статйисем Шупашкарти, Мускаври хаçат-журналта тăтăшах çапăнса тухнă. 1952 çулта РСФСР педагогика наукисен академийĕ К.В.Мальцевăн “Внеклассное чтение русской литературы в национальной школе /V-VII классы/” кĕнекине Трубина

● **ТРУБИНСЕН ÇЕМЙИ, ÇУЛАХАЙРАН СЫЛТĂМАЛЛА: ЫВĂЛĔ НИКОЛАЙ, МĂШĂРĔ ДМИТРИЙ ФЕДОТОВИЧ, МАРФА ДМИТРИЕВНА, ЫВĂЛĔ БОРИС. ХĂЙСЕН ÇУРЧĔ УМĔНЧЕ 1936 ÇУЛТА ӲКЕРĔННĔ.**

Мархви вĕрентӳ меслечĕсене тишкерсе кăларнă. Ахальтен мар Трубинана Чăваш АССР тата РСФСР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ хисеплĕ ятсем панă.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн 4 çул хальхи Çĕрпӳ районне кĕрекен Çырмапуçри земство шкулĕнче вĕрентнĕ. 1913 çулта ăна хăй ыйтнипе тăван ялĕнчи шкула куçарнă.

Пурăна-киле Марфа Дмитриева /хĕр чухнехи хушамачĕ/ хăйсен ял каччипе Дмитрий Федотович Трубинпа пĕрлешсе çемье çавăрнă. Мăшăрĕ те шкулта ачасене вĕрентнĕ, вĕсем тăван ялти шкулта пĕрле ĕçленĕ. Пĕрлешнĕ хыççăн çамрăксем Марфа Дмитриевнăн ашшĕ-амăшĕн килĕнче пурăнма тытăннă. 1928 çулта мăшăр пилĕк стеналлă капмар йывăç пӳрт лартнă. Нӳхреп чавнă, унăн стенине ял çумĕнчи сăртран кăларса килнĕ чула хурса тухнă. Çуллахи шăрăх кунсенче Марфа Дмитриевна кĕлетки çурри таран нӳхрепе кĕрсе ларса çырнă.

Килти хуçалăхра типтерлĕ пулнă вăл. Трубинсем улма, йывăç пахчи чĕртнĕ. Пӳрте кĕмелли картлашкасем патне илсе пыракан сукмакăн икĕ айккипе чечек ĕрчетнĕ. Кил-çурт ăш-чиккине йывăçран ятарласа тунă лартмалли хатĕрсем çине вырнаçтарнă ӳсен-тăран чăн илем кӳнĕ. Кăмака пӳртĕн хыçалти пайĕнче те, малтинче те пулнă. Малти пӳртĕн кăмаки икĕ айккипе хăмапа пӳлсе икĕ пӳлĕм уйăрнă. Пĕринче – хăйсем, тепринче ачисем сывăрнă. Арăмĕпе упăшкин сывăрмалли пӳлĕмĕнче вырăнти ӳнерçĕ ӳкернĕ Марфа Дмитриевнăпа Дмитрий Федотовичăн портречĕсем çакăнса тăнă. Хăна-вĕрле килсен йышăнмалли пысăк пӳлĕмри стена çине хăйсен, ачисен пысăклатса рамăна вырнаçтарнă сăн ӳкерчĕкĕсене вырнаçтарнă. Каярахпа, алă-ура çавăрса ярсан, туяннă çемçе сĕтел-пукан пӳлĕме хăтлăх кӳнĕ. Этажерка тулли – кĕнеке. Хаçат-журнал та чылай. Тĕрлĕ йышши тутлă апат-çимĕç пĕçерме те ăста пулнă Марфа Дмитриевна. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕсене ку ăсталăха та вĕрентнĕ.

Çемьере виçĕ ача ӳснĕ: Таня, Коля, Борис. Ывăлĕсем кĕвĕçемме кăмăлланă. Сĕрме купăс, мандолина каланă. Çак тĕлĕшпе вĕсене Сергей Гурьевич Тургенев учитель нумай пулăшнă. Хăйĕн ачисене ытараймасăрах пулĕ Марфа Дмитриевна кĕçĕн çулхи ачасем валли “Пукане”, “Автан автать”, “Куян юрри”, “Марук чăххи” сăвăсем çырнă. Композиторсем вĕсене юрра хывнă.

Хĕрĕ Таня физкультура урокĕсене юратса çӳренĕ. Анчах пĕррехинче уроксем хыççăн юлса физкультура хăнăхăвĕсем тунă чухне ӳксе ĕнсе шăммине хуçнă. 12 çулти Таня больницăрах вилсе кайнă.

Канашри педагогика училищинчен вĕренсе тухнă Кольăпа Хусанти авиаци институтне вĕренме кĕнĕ Борис Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуç хунă.

Пĕр ачасăр юлнă Марфа Дмитриевнăпа Дмитрий Федотович Çĕрпӳри ача çуртне кайса виçĕ çулти Аньăна усрава илсе килнĕ. Дмитрий Федотович çутă тĕнчерен 1955 çулта уйрăлнă, Марфа Дмитриевна – 1956 çулта. Вĕсен усрав хĕрĕ Анна Дмитриевна Трубина /упăшки хушамачĕпе Ундрицова/ писательсем пулăшнипе Шупашкара килнĕ, ял хуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă, Аслă Куснар ялĕнче агрономра ĕçлесе пурăннă. Вилсен ăна ял масарне Марфа Дмитриевнăпа юнашар пытарнă. Аннăн хĕрĕ Альбина Шупашкарта пурăнать.

Аслă Куснар ялĕнче Трубина Мархвипе мăшăрĕ лартнă пӳрт, вĕсем вĕрентнĕ шкул çурчĕ упранса юлнă. Шкула, ялти пĕр урама М.Д.Трубина ятне панă.

Марфа Дмитриевнăн кĕнекисем кивелмеççĕ. Зоя Романова куçаруçă унăн хайлавĕсене вырăсла калăпласа “Детство”, “У тихой заводи” кĕнекесем кăларнă.

Ашшĕ-амăшĕ пекех çав тери ĕçчен пулнăскер, юмах яма ăста амăшĕнчен, Праççи ятлăскертен, ытарлă каласма вĕреннĕскер, Марфа Дмитриевна чăннипех те халăхра ырă ят хăварнă.

Галина ЕЛИВАНОВА,
К.В.Иванов ячĕллĕ Литература музейĕн

Ырă ят

ПИСАТЕЛЬ ТЕ, ЖУРНАЛИСТ ТА, ФОЛЬКЛОРИСТ ТА...

ЭЛĔК районĕнчи Синер ялĕ пысăках мар, çапах та унта çуралса ӳснĕ 13 çын Чĕмпĕрти чăваш шкулне пĕтернĕ, вĕсенчен 6-шĕ – Золотовсен йăхĕнчен. Çак йăха чăнласах та паллă теес килет, мĕншĕн тесен вăл ăслă та анлă тавра курăмлă çынсемпе пуян. Вĕсем чăваш халăхĕшĕн усăллă ĕç нумай пурнăçланă, пурнăçлаççĕ те. Николай Яковлевич Золотов та Синер ялĕнче çуралса ӳснĕ. Вăл – писатель, журналист, ученăй-фольклорист, литературовед. Тухăç халăхсен коммунизм университетне пĕтернĕскер Мускавра “Ĕçлекенсен сасси” журнал пуçарса янă. 1923 çултанпа “Канаш” хаçат редакторĕн çумĕ, редакторĕ пулнă. Пĕр вăхăтрах “Канаш” хаçат çумĕнче тухса тăракан “Сунталпа” “Капкăн” журналсене редакциленĕ. 1925 çултанпа – СССР Наукăсен академийĕн наука сотрудникĕ.

Нумаях пулмасть “Николай Яковлевич Золотов” кĕнеке пичетленсе тухрĕ. Авторĕсем – А.А.Золотов /Чăваш Ен халăх академикĕ/, В.А.Золотов /ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ/, В.Т.Золотов /Раççей Журналистсен союзĕн членĕ/ – ăна тăванĕ çуралнăранпа 110 çул, журналистсемпе писательсен “Канаш” пĕрлешĕвне йĕркеленĕренпе 85 çул çитнине халлланă. Çак пĕрлешĕве шăпах Николай Яковлевич 1923 çулта йĕркелесе ертсе пыма пуçланă.

Çĕнĕ кĕнекере Н.Золотовăн пурнăçĕпе пултарулăхĕ пирки çырнă статьясен, унăн хăйĕн ĕçĕсен пĕр пайĕ пичетленнĕ. Очерксенче Николай Яковлевичăн ачалăх çулĕсем те, Хĕрлĕ çарта пулнă, Мускавра вĕреннĕ, Наукăсен академийĕнче, Пушкăртра парти ĕçĕнче тăрăшнă тапхăрсем те сăпланнă, ăна 1937 çулта репрессиленине те, таса ятне тавăрнă хыççăн Çĕмĕрлере пурăннине те асăннă. Тĕрлĕ енлĕ пултаруллăскерĕн ĕçĕсене хакланă статьясем те вырăн тупнă унта.

Кĕнекере Николай Яковлевичăн ниçта та пичетленмен статйисене кĕртнĕ, калăпăр: “Çеçпĕл Мишши çинчен пĕрик сăмах”, “Академик Николай Яковлевич Марр” т.ыт.те. Н.Золотов Питĕрте



● **НИКОЛАЙ ЯКОВЛЕВИЧ ЗОЛОТОВ УТМĂЛМĔШ ÇУЛСЕНЧЕ.**

шăпах çак академик патĕнче аспирантурăра вĕреннĕ-çке. “Марр академик тĕнчери паллă вĕрентӳçĕсен хушшинче чи палли. Вăл тата Вĕренӳлĕх Академинчи Чăваш комиссин пуçлăхĕ. Чăваш чĕлхине сăнаса вĕренес ĕçе çĕнĕ çул çине кăларнă вĕренӳçĕ. Чăваш чĕлхине вĕренме Марр чăвашсем патне виçĕ хут килчĕ...” – палăртать вăл. Çак кĕнекерех Николай Яковлевичăн чăваш халăх пултарулăхне, поэзине, музыкине, юррисене тĕпчесе çырнă хăш-пĕр ĕçне вулама пулать. Кунтах писатель-журналист халăхран çырса илнĕ юмахсемпе, юрăсемпе паллашма май пур.

“Николай Яковлевич Золотов” кĕнекене интереслĕ, çав хушăрах чунра ăшă туйăм çуратакан ырă кăларăм теес килет. Авăн уйăхĕн 12-мĕшĕнче Элĕкри культура çуртĕнче унăн презентацийĕ иртнĕ. Унта Золотовсем, вĕсен тăванĕсем, çыравçăсем, журналистсем хутшăннă. Çĕнĕ кĕнеке уявне пуçтарăннă çынсене “Валинкке” ансамбль пултарулăхĕпе савăнтарнă.

И.КЛЕМЕНТЬЕВА.